Ял тăрăхĕсенче

Пиçиххисене туртарах çыхма тивет

Бюджет, укçа-тенкĕ ыйтăвĕ нихăçан та çăмăллисен шутне кĕмен. Уйрăмах хальхи экономика тĕлĕшĕнчи йывăр лару-тăрура ку пушшех те палăрать. Епле татса пама шухăшлаççĕ-ха умри ыйтусене Муркаш ял тăрăхĕнче? Мĕн çине ытларах тимлĕх уйăрасшăн? Çакăн пирки сăмах пуçартăм ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Николай Иванович НИКИТИНПА тĕл пулнă май.

– Николай Иванович, ял тăрăхĕн кăçалхи бюджечĕ пирки мĕн калама пултаратăр?

– Малтанах çак цифрăсене илсе кăтартам. Иртнĕ çул ял тăрăхĕн бюджечĕ тăкаксем енĕпе планпа 11351 пин тенкĕпе танлашнăччĕ пулсан, кăçал валли ку хисеп пĕтĕмпе те 5278 пин тенкĕ кăна. Çакна çителĕклĕ теме çук. Апла пулсан перекетлĕх режимне çирĕп пăхăнас пулать. Бюджет укçи-тенкине кирлĕ-кирлĕ мар çĕре сапалани пулмалла мар. Кунсăр пуçне бюджета пуянлатмалли ытти майсемпе те туллин усă курни кирлĕ. Республика Президенчĕ ЧР Патшалăх Канашне янă Çыру та ку тĕлĕшпе курăмлă пулса тăрать.

– Мĕнле майсем пирки сăмах пырать-ха кунта?

– Ял тăрăхĕн бюджечĕ, тĕпрен илсен, ял тăрăхĕн территорийĕнчи предприятисемпе организацисенче ĕçлекенсен ĕç укçи шайĕнчен, çĕр налукĕнчен, пурлăх çине хуракан налукран тата предпринимательство ĕçĕ-хĕлĕнчен илекен налукран пухăнать. Иртнĕ çулхи итогсем пирки калас пулсан, ку тĕлĕшпе эпир 2009 çулта мĕн палăртнине пур енĕпе те ирттерсе пурнăçларăмăр. Пурлăх çине хуракан налука 820,7 пин тенкĕ (124,6 процент), çĕр налукне 712,4 пин тенкĕ (127,2 процент) пуçтарнă. Уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук 5907,9 пин тенкĕпе (106,3 процент) танлашрĕ.

Апла пулин те усă курман резервсем те çук мар. Калăпăр, иртнĕ çул гаражсен, сарайсен хуçисенчен аренда тӳлевĕ илессипе çителĕклĕ ĕçлерĕмĕр теме çук. Ку енĕпе плана 70 процент кăна пурнăçланă. Апла пулсан кăçал епле пулсан та плана 100 проценчĕпех пурнăçлама мерăсем йышăнас пулать. Нимĕн те тума май çук, ытлашши чурăс чунлисенчен тен парăмсене суд урлă та шыраса илме тивĕ.

Муркашри кирпĕч тата сĕтçу завочĕсем тупăшлă тата тухăçлă ĕçленипе те çыхăннă ял тăрăхĕн бюджечĕ. Çавна май ял çыннисене килти хуçалăхсенче хатĕрлекен сĕте ытларах Муркашри сĕт-çу заводне ăсатма сĕннĕ пулăттăм. Ку вăл хамăршăнах усăллă пулĕ.

Кунпа пĕрлех иртнĕ çул çынсене ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă территорисене тирпей-илем кĕртессипе обществăлла ĕçсене явăçтарса бюджет укçине 214,9 пин тенкĕ перекетлесе хăварма май килчĕ. Пĕтĕмпе вара кăçалхи çул валли 280,9 пин тенкĕ перекетленĕ. Шел пулин те, 2010 çулта ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă территорисене тирпей-илем кĕртме ĕç вăйĕсем уйăрасси шанчăклă мар. Çавăнпа та малтанах палăртса хăварнă пулăттăм, тирпей-илем, тасалăх, йĕркелĕх пирки ял çыннисен, район центрĕнчи предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсен хăйсен ытларах тимлемелле пулать.

Бюджета пуянлатма май паракан татах тепĕр самант пирки асăнам. Хальхи вăхăтра район центрĕнче автомашинăсем çинчен тĕрлĕ тавар сутакансем сахал мар. Малашне вĕсенчен аренда тӳлевĕ илме тĕллев лартатпăр. Çитменнине çав вырăнсенче сутă тунипе пĕрлех хыççăн тĕрлĕ тасамарлăх, çӳп-çап сахал мар юлать. Малашне çуртсем çине е ытти вырăнсене реклама щичĕсем вырнаçтарасси те тӳлевлĕ пулмалла.

Унчченхи çулсенче çуллахи вăхăтра та çĕрле урамсене электричествăпа çутатса тăнă. Кăçал майăн 1-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 1-мĕшĕччен электрохунарсене сӳнтерме тивет. Çакă 100 пин тенкĕ перекетлеме май парĕ.

Татах тепĕр пĕлтерĕшлĕ самант-сĕнӳ. Предпринимательсенчен ытларахăшĕ хальхи вăхăтра хăйсен ĕçнехĕлне суту-илӳпе çыхăнтарать. Паллах, камăн мĕнле кăмăл ĕнтĕ. Анчах та эпĕ пуçласа предпринимательство ĕçне тытăнакансене, ытти предпринимательсене те производство йĕркеленме, продукци туса кăларассине аталантарма сĕннĕ пулăттăм. Кун пек чухне налуксем пухăнасси те ӳсмелле. Хальхи вăхăтра вара кирпĕч блоксем, мунча кăмакисемпе электричество каминĕсем хатĕрлессипе, чӳречене рамисем тăвассипе ырă тĕслĕх кăтартса ĕçлекенсем сахал мар.

Кунпа пĕрлех тата бюджетпа пăхса хунă хăш-пĕр тăкаксене те чакарма май пулĕ тесе шутлатăп. Пĕтĕмпех перекетлĕрех пулнипе, укçатенкĕне шутлама пĕлнипе çыхăннă. Акă бюджет хушшинчи трансфертсене ял тăрăхĕсем хушшинчи Культура çуртне тата библиотекăна ĕçлеттерме 2 миллион тенкĕне яхăн пăхса хунă. Пĕчĕк сумма мар. Ăна чакарма майсем шырас пулать.

– Николай Иванович, нумай хутлă çуртсен картишĕсене, Октябре 50 çул урамри çул хĕррипе çынсем хăйсен автомашинисене лартса тултарни йĕркеллĕ пулăм пулманни пирки пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ сăмах пырать. Пулĕ-и ку тĕлĕшпе йĕрке?

– Ку тĕлĕшпе районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çуллăр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсен çирĕпрех пулни кирлĕ тесе шутлатăп. Чăннипех те инкек-синкек пулса тухсан кун пек чухне пушар е васкавлă пулăшу машини те кирлĕ вырăна çитеймеççĕ. Тĕрĕссипе вара çак автомашинăсен хуçисем асфальт сарнă йĕркеллĕ çул лаптăкĕпе, çуртсен картишĕпе автомашина лартма усă кураççĕ пулсан, мĕншĕн-ха вĕсенчен аренда тӳлевĕ илмелле мар? Ку ыйтăва та çывăх вăхăтрах татса парас пулать тесе шутлатăп.

– Хальхи вăхăтра чылайăшĕн автомашинăсем пур, анчах та пурин те гаражсем çук вĕт-ха.

– Сăмах автомашинăсене çĕр каçма вырнаçтарасси пирки пулсан, ку енĕпе йывăрлăх çук тесе шутлатăп. Автомашинăсене стоянкăна унччен садпа пахча çимĕç комбиначĕ пулнă территорире те, «Моргаушагропромснаб» тата «Моргаушавтотехсервис» предприятисен территорийĕсенче те вырнаçтарма пулать. Акă çăмăл автомашинăсене стоянкăна вырнаçтарма «Моргаушавтотехсервис» предприятийĕнче пĕр уйăхшăн 600 тенкĕ, груз турттармалли автомашинăсемшĕн 1200 тенкĕ тӳлемелле. Хурал та пур, автомойка та ĕçлет.

– Çĕнĕ çула кĕни пĕр уйăх кăна. Мĕн сĕннĕ пулăттăр ял çыннисене 2010 çулта?

– Умри тĕллевĕсем те пĕчĕк мар, задачисем те анлă. Апла пулин те вĕсене пурне те йĕркеллех татса пама пулать тесе шутлатăп. Пĕр-пĕрне ăнланса, алла-аллăн тытăнса ĕçлени кирлĕ ытларах чухне. Унччен мĕнле ӳсĕмлĕ ĕçлесе пынă, малашне те çавăн пекех тăрăшасчĕ. Кăçалхи çул бюджетра укçа-тенкĕ сахалрах. Апла пулин те пĕлтĕрхинчен япăхрах ĕçлес марччĕ, ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансем валли пурăнма, ĕçлеме тата канма пур условисене те туса парасчĕ. Каялла чакни вара никама та чыс тумасть.

В. ШАПОШНИКОВ
калаçнă.

Комисси ларăвĕнчен

Ыйтусем çук мар

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Район экономикин тĕрлĕ сферисенче ĕç укçи тӳлесси мĕнле шайра пулни тата ял тăрăхĕсенче ял урамĕсене çĕрлехи вăхăтра çутă парса тăма электроэнергипе усă курасси пирки район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова сăмах хускатрĕ. Ĕç укçи виçи чакни палăрать. Районти вăтам кăтарту республикăра 11-мĕш вырăнта. Пурăнма кирлĕ минимум 4523 тенкĕпе танлашать пулсан, ял хуçалăх производствинче вăтам ĕç укçи виçи 6591 тенкĕпе танлашать. Ытти отрасльсемпе танлаштарсан, культура ĕçченĕсен ĕç укçи шайĕ пĕчĕкрех.

Район администрацийĕн ĕçĕсен управляющийĕ, комисси секретарĕ А.В. Краснов кризиспа кĕрешекен комисси терлĕ сферăра ĕç-хĕле 2009 çулта мĕнле йĕркелесе пыни пирки каласа пачĕ.

Çавăн пекех ларура комиссин 2010 çулхи ĕç планне йышăнса хăварчĕç.

Районти хуçалăхсенче 2009 çулта уйăхри вăтам ĕç укçи виçи миçе тенкĕ пулнине кăтартни

Ленин яч. хис.	3693
Суворов яч. хис.	6024
Ильич яч. хис.	6064
Е. Андреев яч. хис.	6585
«Оринино»	5975
«Свобода»	4740
«Лидер»	2733
Чапаев яч. хис.	6385
«Герой»	7486
«Восток»	4911
«Передовик»	4564
«Ударник»	6327
«Рассвет» АФ»	1308
«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики	12638
«Волга»	4617
«Агро-Урожай»	4590
Чкалов яч. хис.	7438
«Хлебороб»	3929
«ВТМ»	4907
«Да-Ан»	6397
Вăтамран	**6480**

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашĕн ларăвĕнчен

Çине тăрса ĕçлемесĕр май çук

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Вăрçă ветеранĕсен хисепĕ чаксах пырать. Çавăнпа та вĕсем тĕлĕшпе уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрни кирлĕ. Вĕсен пурнăç, йăла условийĕсене тишкермелле. Кунпа пĕрлех вырăнсенче вăрçă ветеранĕсене халалласа ятарлă стендсем хатĕрлес пулать, унченхисене вара çĕнетмелле.

Пирĕн районта, районти ял тăрăхĕсен территорийĕсенче «Электронное правительство» элементĕсене пурнăçа кĕртесси, унăн пĕлтерĕшĕпе вырăнĕ пирки район администрацийĕн информатика пайĕн пуçлăхĕ В.Г. Лаврентьев каласа пачĕ.

2010 çулхи халăх çыравне хатĕрленесси епле пынипе Чăвашстатăн предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ З.И. Виноградова пĕлтерчĕ. Хальхи вăхăтра çынсем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн туса пымаллине палăртрĕ вăл. Адрес хуçалăхне çĕнĕрен тĕрĕслесе тухмалла. Хушма стендсем йĕркелесси пирки те манмалла мар. Çырава октябрĕн 14–25-мĕшĕсенче ирттерме палăртнă. Унăн малтанхи итогĕсем 2011 çулхи пĕрремĕш кварталта паллă пулаççĕ.

Тĕрлĕ мероприятисене финансласси ыйтăвĕсене район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Р.И. Ананьева хускатрĕ, район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л.Ю. Тарасова ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашĕн унченхи йышăнăвĕсем мĕнле пурнăçланса пынине тишкерчĕ.

Лару итогĕсене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов пĕтĕмлетрĕ.

В. ШАПОШНИКОВ.

Февралĕн 2-мĕшĕ – нимĕç фашисчĕсене Сталинград патĕнчи çапăçусенче çапса аркатнă кун

«Çамрăклах вăрçа лекнишĕн ӳкĕнместĕп»

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Орден-медельсем çакнă пиншакне тăхăннă май Алексей Капитонович тĕкĕр çине пăхкаларĕ. Мăшăрĕ – Анастасия Ефимовна: «Çак çула çитсен те тĕкĕр çине пăхатăн-и тата?» – тесе упăшкине ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпи таранах ăшă кăмăлпа тимлĕн сăнаса илчĕ. «Халĕ те çамрăк вĕт-ха», – тесе шӳтлесе илчĕ ветеран.

Çулсем пĕр тăхтамасăр малалла ыткăнаççĕ, анчах та шăпи çамрăклах хаяр вăрçăра пулма çырнишĕн пĕртте ӳкĕнмест Алексей Капитонович. 1940 çулта кĕркунне ăна Совет Çарне ăсатаççĕ. 19 çулхи яштак каччăна ашшĕ-амăшĕпе тăванпĕлĕшĕ салтакранах вăрçа лекессе шутласа ăсатса яман, паллах.

Вăрçăри çапăçусенче вара Алексей Капитонович 1941 çултанпах Тăван çĕршыва хӳтĕлет. Сталинград патĕнчи çапăçусене хутшăниччен те вăл икĕ хутчен аманать. Çамрăк ӳтпӳ вара сурансенчен темиçе хут та вăйлăрах пулнипе чылай çапăçава хутшăнать хастар салтак.

«Пĕр çапăçава хĕрĕххĕн кĕтĕмĕр, çапăçу хыççăн вара саккăрăн çеç юлнă иккен... Нимĕç фашисчĕсен снарячĕсемпе пульлисем лекнипе манпа пĕрле, юнашар çапăçнă салтаксем «çĕре тăкăнни» мĕн чуль пулнă пуль», – каласа кăтартать ветеран.

Алексей Капитонович пулнă çар чаçне Сталинграда куçарнă хыççăнхи вăхăт – унăн вăрçă историйĕнчи хăйне май тапхăр. Çапăçусенче хастар чăваш каччипе юнашар çумаçумăн украинецсем, беларуçсем тата грузинсем Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ.

«Çăкăр патне ятарласа 5-6 салтак пĕрле юхан шыв тепĕр енне кайса килеттĕмĕр. Унтан типĕтнĕ пулăсем те илсе килме май пулатчĕ тепĕр чух. Вара темиçе кун пурăннă хулана фашистсен çарĕсенчен хӳтĕлесе.

Пĕрре каçхине тепĕр кун нимĕçсем çине тапăнмаллине пĕлтерчĕç. Ирпе малалла ыткăнтăмăр. Нимĕçсем мар, румынсем пире хирĕç килеççĕ. Ытлашшиех çапăçас кăмăллă пулман пулмалла – аллисене çӳлелле çĕклеççĕччĕ. Çапăçасшăннисем – нимĕçĕсем вара «путвалта» пулнă иккен. Çавăн чух нумай румына тыткăна илтĕмĕр, çапăçрăмăр», – çак аса илӳсене пире каласа панипе шухăша путрĕ вăрçă ветеранĕ. «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн» медаль вара вăрçă çинчен ăна аса илтерсех тăрать.

Темĕнле йывăр пулсан та чăтнă

Сталинград патĕнчи хаяр çапăçусене хутшăннисенчен пĕри – 1923 çулта Çатракасси ялĕнче çуралса ӳснĕ Валериан Игнатьевич Мартынов. Пирĕн хушăра паян çук ĕнтĕ вăл, 1996 çулта çĕре кĕнĕ.

Унченхи пурнăç йĕрки 7 ачаллă çемьере çитĕннĕскерĕн нимĕнпех те уйрăлса тăман. Шкул пĕтернĕ хыççăн – педрабфак, кайран – вăрçă. 1942 çулхи январьте çар ретне илеççĕ ăна. Пулеметчика вĕренсе тухнăскер Сталинграда хӳтĕлеме хутшăнать, аманать. Снаряд ванчăкĕ унăн хăрах ӳпки витĕр тухать. 1943 çулхи майăн 26-мĕшĕнче инвалид пулса киле таврăнать. Хыççăн шкулта военрукра та, колхоз председателĕнче те, райпо тата хатĕрлев кантурĕн системинче те, ытти ĕççенче те тăрăшать. Малалла вăл çырса хăварнă аса илӳсен сыпăкĕсене пичетлетпĕр:

«...1942 çулхи июль уйăхĕнче Сталинград фронтне ăсатрĕç. Фронта ăсатиччен пухса йĕркелемелли пункта – Пермь облаçĕнчи Теплая гора станцине çитерчĕç. Пирĕн часть 97-мĕш уйрăм

стрелковăй бригада пулса тăчĕ. Сталинград патне сентябрь вĕçĕнче çитрĕмĕр.

Эпир Сталинграда кăнтăр енчен Бекетовка текен вырăнта пĕтĕм октябрь уйăхĕпех хӳтĕлерĕмĕр. Ноябрĕн 3-мĕшĕнче çур çĕр иртни 1–2 сехетсенче пулĕ пире окопсенчен тăратса наступление илсе кайрĕç. Пирĕн пулемет расчечĕн 3-мĕш стрелковăй взвода наступлени вăхăтĕнче сылтăм енчен хӳтĕлемелле пулса.

Тул çутăлнă вăхăтра наступлени пынă чухне ман çумри иккĕмĕш номерлĕ пулеметчика – Елчĕк районĕнчи И.Е. Егорова нимĕç снайперĕ каска витĕрех тӳррĕн пуля лектернипе вĕлерчĕ. Эпĕ ун вырăнне патронсем илсе пырса паракан Никешкина (Мари Республикинчи Еласово ялĕнченччĕ) чĕнтĕм. Вăл та ман пата 3–4 метр шуса çитеймерĕ, тĕплĕн пытанса ларнă снайпер ăна та персе вĕлерчĕ.

Эпĕ питĕ тинкерсе пăхрăм та пирĕнтен инçех те мар темĕнле хура тĕмескене асăрхарăм. Эпĕ пулемета çав тĕмеске çине тĕллесе пеме тытăнтăм. Çак нимĕçе е амантрăм, е вĕлертĕм пулас. Хыççăн снайпер урăх пеме пăрахрĕ.

Эпĕ пулемет патĕнче пĕчченех выртса юлтăм. Нимĕç салтакĕсене пулеметран çунтаратăп. Часах тăшман снарячĕсем, минăсем ман пулемет тавра тăкăнма тытăнчĕç. Мина е мала, е каярах ӳкет. Тĕрĕссипе ман тавра çĕр чĕтресе кăна тăрать. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, пĕр мина ман çывăхрах сулахай енче çурăлса кайрĕ. Ман çурăма мина ванчăкĕсем лекрĕç. Çурăм питĕ хытă пĕçерсе кайрĕ.

Санитарсене кăшкăратăп. Вĕсем пулеметпа патне пымаççĕ, вăл вырăнтан аяккарах шуса тухма ыйтаççĕ. Мĕншĕн тесен пулемет точки çинче пĕрмаях минăсем çурăлаççĕ. Манăн аманнă кĕлетке (мина ванчăкĕ ӳпке витĕр тухса кайнă пулнă) хытса ларма тытăнчĕ. Вара аран-аран пĕтĕм вăя пухса пульăсем вĕçнине пăхмасăр чавса тата чĕркуççи çинче пулемет патĕнчен шуса тухрăм. Санитарсем сурана кăкăр тавра бинтпа çыхса ячĕç. Кунĕпех çак çырмара выртма тиврĕ. Манпа юнашар пирĕн взвод командирĕ Завязкин лейтенант, пуçран аманнăскер, кăшкăрса выртрĕ. Медсанчаçе пире каç пулсан кăна илсе кайрĕç.

Çĕрле Атăл урлă каçарнă хыççăн вăрçă хирĕнчи куçса çӳрекен госпитале, кайран вара Ленинск хулинчи малтан универмаг пулнă çуртра вырнаçнă госпитале лекрĕм. Кайран Çурçĕр Казахстан облаçне кĕрекен Уральск хулине куçарчĕç. Операци те турĕç. Çапла вара 1943 çулхи май уйăхĕччченех тĕрлĕ госпитальсенче сывалма тиврĕ. Кайран вара инвалидноç парса комиссовать турĕç».

Сăн ӳкерчĕкре: В.И. Мартынов. 1991 çул.